**И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче Хусанта иртекен Пĕтĕм тĕнче Универсиадине халалласа сăн ӳкерчĕксен куравĕ уçăлчĕ.**

Вĕсенче Универсиада уçăлни, ăмăрту саманчĕсем, паллă спортсменсем, вĕсен тупăшăвĕсем, Раççейĕн пĕрлештернĕ командинчи хĕрсемпе каччăсем, спорт керменĕсем, хула пурнăçĕпе çыннисем тата ытти те сăнланнă. Сăн ӳкерчĕксен авторĕсем – Чăваш Енри фотографсем, ЧПУ студенчĕсемпе преподавателĕсем.

Чăваш патшалăх университечĕ – Универсиада партнерĕ, 2011 çулта ăна «Универсиадăн аслă вĕренӳ заведенийĕ» ят панă. Аслă шкулта вĕренекен 90 ытла студент Хусанта волонтерта ĕçлет, хăшĕ-пĕри пресс-службăра тăрăшать. 4-мĕш курсра ăс пухакан пулас журналист Евгения Степанова «Универсиада сăнĕ» ята тивĕçнĕ, хĕрĕн сăнне Хусан урамĕсенчи ятарлă экрансенче курма пулать. Пĕлтĕр ЧПУ дипломне илнĕ Ирина Юманова студентсен ăмăртăвĕнче хăвăрт утас енĕпе икĕ медаль çĕнсе илчĕ.

**Е.Андреев. Газета «Хыпар». 2013.17 июля.**